[illegible]-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
МАРТ
25
ЮНКУН
70(6095) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔН,
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

30. **Иван Архипович КУДРЯШОВ** — Шупашкар МТС-ĕнчи тракторист. Кудряшов юлташ хăй ĕçлемелли трактора 1941 çулти декабрь уйăхĕнчех, срокчен юсаса пĕтернĕ, кун хыççăн вăл ытти тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсама тытăннă.

31. **Елена Федоровна КУДРЯВЦЕВА** — Шупашкар МТС-ĕнчи трактористка. Кудрявцева юлташ хăй ĕçлемелли трактора 1941 çулти декабрь уйăхĕнчех, срокчен юсаса пĕтернĕ.

32. **Петр Викторович ВИКТОРОВ** — Шупашкар МТС-ĕнчи тракторист. Викторов юлташ, тракторсене пăхмалли технически правилăсене пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пырса, хăй тракторне пĕрре те простой тума паман, производствăлла заданисене яланах иртерсе тултарса пынă, халĕ хăй ĕçлемелли трактора çуракине тухма срокчен хатĕрлесе çитернĕ.

Вăрман хатĕрлевĕн татăклă тапхăрĕ

Сталин юлташ фронт валли самолетсем, танксем, тупăсем, винтовкăсем тата ытти хĕçпăшалсем ытларах та ытларах парса тăрас задача лартрĕ. Çак пысăк та ответлă задачăна ăнăçлăн пурнăçлас çĕрте йывăç питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Лайăх пахалăхлă йывăç пирĕн çар промышленноçне ытти чĕрттаварсем пекех питĕ кирлĕ. Унсăр пуçне тылра пĕр чарăнмасăр пыракан строительство та сахал мар йывăç ыйтать.

Пирĕн Чăваш çĕршывĕнчи вăрмансем фронтпа тыла кирлĕ йывăçсемпе пуян. Пирĕн республикăри ĕççыннисем çав йывăçсене фронтпа çĕршыв валли май пур таран ытларах хатĕрлесе пама тивĕçлĕ.

Малта пыракан колхозсем çакăншăн тимлĕн тăрăшаççĕ. Шăмăршă районĕнчи «Мекеш» тата «Юлташ» ялхуçалăх артелĕсен колхозникĕсем декабрь уйăхĕн пуçламăшĕнчех вăрмана ĕçлеме кайнă та мĕн юлашки вăхăтчченех пĕр татăлмасăр вăрманта ĕçленĕ. Вĕсем вăрман хатĕрлес тата турттарас енĕпе хăйсене панă заданисене срокчен тата ытлашшипех тултарнă. Çавăн пекех вăрман хатĕрлес ĕçе Елчĕк районĕнчи «Путь Ленина», Хĕрлĕ Чутай районĕнчи ВКП(б) ячĕпе тăракан колхозсем те ĕçленĕ. Канаш районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозран вăрман хатĕрлевĕнче ятарласа тунă бригада ĕçлет. Вăл бригада вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе колхоза панă задание çак кунсенчех тултарать.

Анчах та çакăн пек лайăх ĕçлекен колхозсемпе бригадăсем çителĕксĕр-ха, вĕсем пĕтĕм ăнăçлăха татса параймаççĕ. Ĕçĕн ăнăçлăхĕ партипе совет тата вăрман хатĕрлекен организацисем ĕççыннисене çак ĕçе большевикла мобилизацилениччен, вăрманти ĕçсене вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхсемпе туса пынинчен килет.

[illegible]

Вăрман турттарас тата хатĕрлес ĕçсем çителĕксĕр пулса пыни райсовет исполкомĕсемпе парти райкомĕсенчен те чылай килет. Вĕсем Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ вăрман хатĕрлевĕнче çуран тата лашапа ĕçлемелли тӳлевлĕ повинность иртермелли çинчен йышăннă постановление кирлĕ пек пурнăçласа пымаççĕ. Ку тĕлĕшпе Элĕк районне илсе кăтартма пулать. Элĕк районĕ вăрман хатĕрлев планне пĕлтĕр те тултараймарĕ, кăçал та юлса пырать. Районри колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче Çĕмĕрлери механизациленĕ лесопунктра тата Хĕрлĕ Чутай леспромхозĕнче ĕçлеççĕ, анчах ниçта та плана тултарса пыни çук. Хĕрлĕ Чутай леспромхозĕнче ĕçлекен колхозсем пĕрремĕш квартал планне хатĕрлес енĕпе 26 процент тултарнă, турттарас енĕпе вара пĕр процент та тултарман. Ĕç çакăн пек начар пыни ВКП(б) Элĕк райкомĕпе райсовет исполкомне паллă ĕнтĕ. Апла пулин те вĕсем ĕçе тӳрлетес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмаççĕ, уйрăм колхозсем ĕç вăйĕ мĕн таран парса тăнине тĕрĕслесе тăмаççĕ.

Вăрман хатĕрлес ĕçре Хĕрлĕ Чутай, Советски, Ишлей районĕсем те çаплах юлса пыраççĕ.

Чылай районсем вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ çителĕксĕр парса тăраççĕ. Сăмахран, Канаш леспромхозĕнче Канаш, Шăхасан, Тăвай, Елчĕк, Вăрмар тата Куславкка районĕсенчи колхозсем ĕçлеççĕ. Мартăн 21-мĕшĕнче çак ултă районран пĕтĕмпе те çуран 963 çын, лашапа 532 çын ĕçленĕ, мартăн 22-мĕшĕнче вĕсен йышĕ татах та чакнă. Ытти районсенчен те вăрман хатĕрлевне çуран тата лашапа ĕçлеме планпа пăхнинчен çуррине яхăн кăна тухаççĕ.

Чылай колхозсем вăрманта ĕçлеме ятарласа бригадăсем организацилемеççĕ. Колхозниксене татăклă заданисем памаççĕ, лашасем валли çителĕклĕ таран апат-çимĕç парса ямаççĕ. Çавна пула вăрмана ĕçлеме кайнă колхозниксем заданисене тултариччченех каялла таврăнаççĕ. Ун пеккисенчен Элĕк районĕнчи «Красный маяк», «Новый путь», Советски районри «Пробуждение» колхозсене илсе кăтартма пулать. Вĕсен колхозникĕсем вăрмана тухса пĕр-ик кун ĕçлеççĕ те, выльăх апачĕ пĕтрĕ тесе, каялла таврăнаççĕ.

[illegible] ...са тухмалла, юханшывсене тасатса хатĕрлемелле, вĕрен таврашĕпе ĕç хатĕрĕсене хатĕр тытмалла, инçетри пунктсене апат-çимĕç, тумтирсем илсе пымалла, организаципе техника енчен пур ĕçсене те тумалла.

Фронтпа тыла халĕ питех те нумай йывăç материалсем кирлĕ. Вăрман хатĕрлев планне тултарассишĕн большевикла кĕрешер, çĕршыва кирлĕ чухлех йывăç парар!

"Пионер Чувашии" танк тума

Ишлей районĕнчи шкулсенче Етĕрнери пионерсем «Пионер Чувашии» танк тума чĕнсе каланине сӳтсе-яваççĕ.

Çак кунсенче ку ыйтупа Ярапайкасси тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсен пухăвĕ пулнă. Ачасем Етĕрнери пионерсен чĕнĕвне хапăл туса йышăннă. Çавăнтах «Пионер Чувашии» танк тума 450 тенкĕ укçа пухнă. 7-мĕш класра вĕренекен пионерка Таюя Соколова танк тума 16 тенкĕ, Рая Соколова, Маня Васильева, Августина Горшкова пионеркăсем 15-шер тенкĕ панă.

Шкулти учительницăсем Дмитриевăпа Римова юлташсем—«Пионер Чувашии» танк тума 50-шар тенкĕ, аслă вожатăй Н. Тимакова юлташ 30 тенкĕ хывнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 23-мĕшĕнче фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

Мартăн 22-мĕшĕнче нимĕçсен 26 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 11 самолет пĕтнĕ.

Мартăн 23-мĕшĕнче Мускав патĕнче противникăн 3 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Мартăн 22-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен 15 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 155 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 140 лавне, 32 орудине, зенитнăй пулеметсен 6 точкине, 11 минометне пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен 7 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине икĕ батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Иртнĕ эрнере, мартăн 15-мĕшĕнчен 21-мĕш хушшинче, нимĕçсен 249 самолет пĕтнĕ. Çав вăхăт хушшинчех пирĕн 77 самолет пĕтнĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем артиллерирен пенипе тата разведка тăвакан группăсем çапăçнипе икĕ кун хушшинче тăшманăн 30 ДЗОТ-ĕпе блиндажĕсене тата землянкисене, наблюдательнăй пунктне çĕмĕрнĕ. Çав вăхăт хушшинчех тăшманăн 16 станковăй пулеметне, минометсен батарейине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă. Çакнашкал трофейăсем тытса илнĕ: 11 пулемет, 24.000 патрон, 250 мина тата винтовкăсем нумай. Нимĕçсен, вилнисене шутласан кăна та, 1.800 салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть штык вĕççĕн тытăçса вăйлăн çапăçнă хыççăн нимĕçсене халăх пурăнакан 2 пунктран вăйлă çирĕплетнĕскерсенчен, хĕссе кăларнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна пĕтерсе тăкнă, 6 станковăй пулемет, 2 миномет, 2 радио станци, автоматсемпе ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем тытса илнĕ. Çак çапăçура Васин лейтенантăн танковăй экипажĕ паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнă. Противникăн оборонине шăтарса кĕрсе, Васин юлташăн танкĕ танксене хирĕç пемелли виçĕ тупăпа тата 2 ДЗОТ-а унта кĕрсе ларнă гитлеровецсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă. Çакăнта танк сиенленнĕ пулнă. Противник персе тăнине пăхмасăрах, танк экипажĕ хăйĕн танкне юсанă та каллех тăшманăн укреплениййĕсене штурмлама тытăннă, нимĕçсене 6 оруди, 4 миномет, 3 станковăй пулемет пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 473-мĕш пехотнăй полкĕн штабне çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем противника халăх пурăнакан 2 пунктран хĕссе кăларнă. Пирĕн подразделени йышăнса илнĕ К. ялĕшĕн уйрăмах вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Тăшман хăйĕн сухатнă позицине каялла таврăс шутпа çапăçăва пĕр батальон кĕртсе янă. Хăйĕн пехотине 5 танкпа пулăшса пырса, противник пĕр кун хушшинче икĕ хутчен контратака тунă. Анчах унăн контратакисене пирĕн чаçсем, противника пысăк çухатусем кӳрсе, каялла сире-сире пăрахнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче совет сăн 5 гвардеец-истребителĕ хамăрăн наступлени туса пыракан чаçсене хӳтĕлесе тăнă. Часах пирĕн летчиксем нимĕçсен 8 истребителĕ сыхласа пыракан 22 бомбардировщикне асăрханă. Противника хамăрăн войскăсем тăнă вырăн патне çывхарма парас мар тесе, совет летчикĕсем атакăна ыткăннă. Вăхăт нумаях та иртмен, лейтенант Ловейкин персе лектернĕ «Мессершмитт-110» самолет çĕрелле персе аннă. Капитан Ефремов «Мессершмитт-109» самолета, капитан Дохов тăшманăн 2 самолетне персе антарнă. Нимĕç самолечĕсен стройĕ арканса кайнă. Çакăн хыççăн татах тепĕр «Мессершмитт-109» самолетпа 2 бомбардировщике персе ӳкернĕ. Тăшманăн ытти самолечĕсем каялла, хĕвеланăçнелле çаврăннă. Пирĕн летчиксем хăйсен аэродромĕ çине ăнăçлах таврăннă.

* * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Вульф хăйĕн арăмĕ патне çапла çырнă: «Акă халĕ эпир хамăр юлашки вăхăтра йышăнса тăнă ялтан тухса тартăмăр. Эпир тӳрех 15 километр каялла чакрăмăр. Икĕ кун та икĕ каç ĕнтĕ эпир пĕр канăç та курман. Çав кунсемпе çĕрсем хушшинче эпир хамăрăннисене питĕ нумай çухатрăмăр. Пирĕн рота пĕчĕк ушкăн пек кăна тăрса юлчĕ. Рота командирĕ те стройран тухрĕ. Каялла чакнă чухне пирĕнтен нумайăшне тăм илсе ячĕ. Çакă вăл питех те хăрушă япала пулчĕ».

* * *

Курск облаçĕнчи Мясоедово ялĕнче пурăнакан çынсене нимĕç оккупанчĕсем пурне те çаратса тухнă. Гитлеровецсем тунă çавтери тискер преступленисене кĕскен илсе кăтартатпăр: гитлеровецсем колхозниксен 372 çуртне, 3 шкул çуртне, чиркĕве, 352 сарая, 15 амбара тата 9 витене çунтарса янă. Нимĕç вăрă-хурахĕсем ялти çынсенчен 142 ĕне, 11 лаша, 71 сурăх, 91 сысна, 1.622 чăх, мĕнпур апат-çимĕçе, велосипедсемпе патефонсене, çĕвĕ çĕлемелли машинăсене, тумтире, атă-пушмаксене, кĕпе-йĕмсене, чашăк-тирĕксене тата килти ытти нумай тĕрлĕ вак-тĕвек япаласене йăлтах пуçтарса тухса кайнă. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем ялти 34 çынна персе пăрахнă.

Мартăн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Миссен юлташ командир пулса ертсе пыракан часть (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ), икĕ кун хушши вăйлăн çапăçса, халăх пурăнакан икĕ пункта йышăнса илнĕ, çав çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксене хирĕç пемелли 3 оруди, 2 радиостанци тата ытти çар пурлăхĕсем.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 700 çынна çити пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 17 танк çĕмĕрнĕ тата тытса илнĕ.

Çак фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн чаçсем, наступленилле çапăçусем туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă, çапăçусенче нимĕçсен 6 орудине, 4 минометне, темиçе пулеметне, 3 ДЗОТ-не пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Пирĕн пĕр авиачаçри летчиксем (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) пĕр кун хушшинчи çапăçусенче тăшманăн 3 самолет персе антарнă, 18 автомашина тата боеприпассемпе ытти çар пурлăхĕсем тиенĕ 11 лав пĕтерсе тăкнă, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Танкист Тихонов юлташ нимĕçсен вăйлăн çирĕплетнĕ пунктне çĕмĕрсе кĕнĕ те, тупăпа пулеметсенчен персе тата гусеницăсемпе таптаса, противникăн 4 блиндажне, 2 ДЗОТ-не, танксене хирĕç пемелли орудине тата тăшманăн 80 салтакне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Санитарнăй инструктор А. П. Калекина юлташ юлашки вăхăтра çапăçу хирĕнчен аманнă 82 боецпа командира, вĕсен хĕçпăшалĕсемпе пĕрлех, çĕклесе тухнă.

* * *

Пирĕн войскăсем çаварса илнĕ нимĕçсен 16-мĕш армийĕ техникăпа чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк çухатусем тӳсет. Çав çухатусене пытарса кăварас тесе, гитлеровецсем хăйсен вилнĕ салтакĕсемпе офицерĕсене кăна мар, çавăн пекех тата хăйсемпе пĕрле илсе кайма пултарайман йывăр аманнă салтакĕсемпе офицерĕсене те çунтарса яраççĕ. Çапла, сăмахран, К. ялĕнчен чакнă чухне нимĕçсем хăйсен аманнă 60 салтакне çунтарса янă.

* * *

Нимĕçсен 298-мĕш дивизийĕнчи самокатчиксен иккĕмĕш эскадронĕнчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Георг Фулла çапла каласа панă: «Вырăссем Т. ялĕ çине наступлени туса пыратчĕç. Çав яла нимĕçсен темиçе ротипе пирĕн эскадрон хӳтĕлесе тăратчĕ. Çапăçу çур куна пычĕ, вăл эпир поражени тӳснипе вĕçленчĕ, пирĕн каялла чакма лекрĕ. Шыв арманĕ патĕнче эпĕ тата пирĕн темиçе салтак пĕрле тыткăна парăнтăмăр. Хăйĕн подразделенийĕн юлашкийĕсемпе каялла чакакан офицер пирĕн çине ручной граната ывăтрĕ. Темиçе салтак вилчĕ, эпĕ вара амантăм».

* * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Шуак хăйĕн çемьи патне Германие çапла çырнă: «Эпĕ январĕн 11-мĕшĕнчен пуçласа атăпа шинеле хывмастăп. Вырăссем кăнтăрла та, çĕрле те канăç памаççĕ. Вилнисен шучĕ кунран кун ӳссе пырать. Пĕр кун хушшинче кăна пирĕн ротăра 17 çын вилчĕ. Ротăра малтан пулнă 160 салтакран, ăна 30 çын хушса панă пулин те, 60 çын кăна тăрса юлчĕ».

Пĕрремĕш квартал планне тултарчĕç

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар отечественнăй вăрçă фрончĕсенче çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туни çине ответлесе, районри чылай финагентсем укçа-тенкĕ пухас ĕçе лайăхлатрĕç. Вĕсенчен чи лайăх ĕçлекен финагентсем А. Айкин (Нăрваш-Шăхаль ялсовечĕ), Н. Ларев (Пăлапуç-Пашъел ялсовечĕ), С. Зуев (Кĕçĕн Арапуç ялсовечĕ) тата Г. Нягин (Çĕньял ялсовечĕ) юлташсем 1942 çулти пĕрремĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана ытлашшипех тултарчĕç.

В. КРАСНОВ.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Вăхăта сая ямасăр

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Çураки вăхăчĕ çывхарса килет. Кашни кун халĕ хаклă, унпа кирлĕ пек усă курса, çуракине тухма хатĕрленмелле. Çакăншăн тăрăшаççĕ халĕ «Авангард» колхоз членĕсем. Колхозри комсомолецсемпе çамрăксем ĕçе пуçарса пыраççĕ. Тулă, сĕлĕ, пăрçа-ясмăк вăрлăхĕсене кирлĕ таран тасатса сортласа хунă. Вăрлăх тасатнă çĕрте А. Антонова, Е. Кудряшова, В. Карзакова колхозницăсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлерĕç. Александров, Чугбанов комсомолецсем 25 центнер кĕл, 20 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлерĕç, тимĕрçĕ Казанцев юлташ 10 плут, 2 сеялка, 16 сӳре юсаса хучĕ.

Çуракине ăнăçлăн туса ирттерессинче туртăм вăйĕ чи пысăк вырăн йышăннине колхозра ăнланаççĕ. В. Артемьев, П. Ершов, Я. Яковлева конюхсем çуракинче ĕçлеме палăртнă лашасене уйрăмах лайăх пăхаççĕ.

Анчах та колхозра хăшпĕр тĕлĕшпе çуракине хатĕрленес ĕç начар пырать-ха. Тĕслĕхрен, лаша кӳлмелли хăмăтпăявсене тата ыттисене юсама тата çĕнĕрен тума тытăнман. Çавăн пекех тихасене тата хĕсĕр ĕнесемпе вăкăрсене кӳлсе сӳреме вĕрентме те тытăнман.

В. СЕМЕНОВ.

Çамрăк выльăхсене контрактацилеççĕ

СЕНТĔРВАРРИ. Новинскри Сталин ячĕпе тăракан колхоз паянхи кун тĕлне 30 пăру, 2 сурăх контрактацилерĕ. Çамрăк выльăхсене контрактацилесси районра ытти колхозсенче те пулса пырать. Арманкассинчи «Власть труда», Турикаçри «Малалла» тата ытти чылай колхозсем çамрăк выльăхсене контрактацилес плана тултарчĕç.

«Çĕнĕ ял» колхоз (председателĕ М. Некрасов юлташ) çамрăк выльăхсене илес тата контрактацилес плана 150 процент тултарчĕ. Колхоз хăйĕн фермисенчи выльăхсен йышне ӳстерессишĕн тата кашни колхозника ĕнеллĕ, выльăх-чĕрлĕхлĕ тăвассишĕн тăрăшать. Халĕ илнĕ çамрăк выльăхсене усрама тасa тата ăшă витесем хатĕрленĕ.

Анчах та Кукашнинчи «Наркомюст» колхоз (председателĕ А. Романов юлташ) пĕр выльăх та контрактацилемен-ха. Ку ĕçе кунта выльăхсене хупма вите çук тесе тумасăр тăраççĕ.

А. РАЗИН.

Пуçаруллăн ĕçлеççĕ

СЕНТĔРВАРРИ. Шуркассинчи Киров ячĕпе тăракан колхоз çуракине лайăх хатĕрленет. 5-мĕш бригада бригадирĕ В. Павлов пуçарăвĕпе колхозниксем колхоз уйхирĕсене çемçетме Шупашкартан тислĕк турттараççĕ. Нумаях пулмасть бригадăри колхозниксем Шупашкарти чиркӳсен тăррисенчен 54 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса турттарчĕç.

Иртнĕ çул бригада 3 гектар çĕр лаптăкĕ çинче 240-шер центнер çĕрулми туса илчĕ. Кăçал та уйхире лайăхрах çемçетсе татах та тухăçларах тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

ПЕТРОВ.

Пахча-çимĕçсем лартма хатĕр

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Анат Кăмаша ялсоветĕнчи «Волга» колхоз пахча-çимĕçсем лартса тăвас тĕлĕшпе темиçе çул хушши ĕнтĕ паха тĕслĕхсем кăтартать. Вăл кашни çулах темиçе вуншар тонна хăяр, помидор, сухан, арбуз т. ыт. те туса илет. Иртнĕ çулта вăл юр кайса пĕтиччченех Çĕмĕрле пасарĕнче симĕс сухан, кăшт каярахпа—хăяр сутрĕ.

Пахча-çимĕçсем колхоза пысăк тупăш параççĕ, вĕсене вăл çулсерен 30—40 пин тенкĕлĕх сутать. Çавăншăн ĕнтĕ колхозниксем пахча-çимĕç туса илес тĕлĕшпе, тырпул, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстернĕ çĕрти пекех, тăрăшса, вăя хурса ĕçлеççĕ.

Хальхи вăхăтра пахча-çимĕç бригадинче хĕрӳллĕ ĕç пырать. Бригада членĕсем, пахчаçă П. Ксенцов юлташ ертсе пынипе, парниксене, теплицăсене тасатса йĕркеленĕ, вăрлăхсем акнă, пахчана 300 лав ытла тислĕк кăларнă тата кĕл, чăх-чĕп тислĕкĕ пухнă. Иртнĕ çулта колхоз пахча-çимĕçсем 7 гектар çинчен туса илнĕ, кăçал çав çĕр лаптăкĕ 10 гектара çитмелле. Вăл шутран купăста 3 гектар çине, хăяр—2 гектар, помидор—1,5 гектар, арбуз—1 гектар çине лартма палăртнă. Вăрлăхсем пур культурăсем енĕпе те çителĕклĕ.

— Пирĕн вăрлăхсем хамăра валли кăна мар, сутмалăх та пур. Кашни çулах эпир ытти колхозсене сахал мар вăрлăх паратпăр, кăçал та эпир сахал мар вăрлăх сутрăмăр, халĕ те сутатпăр, — тет Ксенцов юлташ.

Совет халăхĕн патриотизмĕ—тăшмансем нихăçан çĕмĕреймен крепость

ЛЕНИНГРАД, мартăн 23-мĕш. (ТАСС). Ленинград облаçĕн нимĕçсем вăхăтлăха оккупациленĕ икĕ районĕнчи колхозниксем—3000 колхозник—Сталин юлташ патне çыру çырса яни çинчен хаçатсенче пĕлтернĕччĕ.

«Вырăс халăхĕ нихăçан та чура пулас çук!»—тесе тупа тăваççĕ çак çырура паттăр колхозниксем.

Çырăва çырнă вăхăтрах çак районсенчи колхозниксем Ленинграда пулăшма ялсем тăрăх ялхуçалăх продукчĕсем пуçтарнă. Фашистсен çаратусăçăрĕнчен пытарса хăварнă запасран колхозниксем 380 центнер тырăпа кĕрпе, 120 центнер тараи çу тата ытти тĕрлĕ продуктсем пухма пултарнă. Пухнă тырăпа ытти продуктсене Ленинграда ăсатма 200 лав тупса хатĕрленĕ. Ку лавсен хĕрлĕ обоз фронт линийĕ патнелле çын çӳремен çулсемпе вăрттăн тата çĕрлехи вăхăтсенче шăваннă.

Фашистсен тылĕнчен продуктсем тиесе пынă геройла колхозниксене чысласа, Ленинградри нумай предприятисенче калаçусем тата митингсем туса ирттернĕ.

— Совет халăхĕн патриотизмĕ вăл—пирĕн тăшмансем нихăçан çĕмĕреймен крепость пулса тăрать,—тенĕ Н-ски заводри рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен митингĕнче слесарь-стахановец Васильев юлташ.—Хамăр облаçри колхозник-партизансен геройла ĕçĕ çине ответлесе, эпĕ вăрçă валли кирлĕ машинăсем тумалли задание срокчен тултарма сăмах паратăп,—тесе вĕçленĕ вăл хăйĕн сăмахне.

Митингри çынсем хăйсем çине Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва ялăн сарса яма обязательство илнĕ, çак майпа фронт валли кирлĕ продукцие ытларах та пахалăх тĕлĕшпе лайăхрах туса кăлармa сăмах панă.

Н-ски электростанцири рабочисем колхозник-партизансене чĕнсе çырнă сăмахĕнче çапла калаççĕ:

«Геройсем! Эпир сирĕн сассăра илтетпĕр. Эпир ăна эсир хамăрăн тăван Сталин патне янă çыру урлă илтрĕмĕр. Сирĕн геройла ĕçсемпе эпир хавасланса савăнатпăр. Эсир: «Совет халăхĕ нихăçан та чура пулас çук!» тесе çыратăр. Çак чĕреран тухакан мăнкăмăллă сăмахсем пĕтĕм совет патриочĕсен пĕрлĕхлĕ шухăшне кăтартса параççĕ. Эсир пирĕн хулашăн çавтери тăрăшнишĕн эпир чĕреран хавасланатпăр. Эсир Сталин патне янă çыру, эсир тунă чаплă ĕç пире татах та ытларах ĕçлеме хавхалантарать, хамăра шеллемесĕр ĕçлеме хушать. Çĕнтерĕве пĕрле—фронтăн икĕ енĕпе те пĕрле пулса тупатпăр. Фашистла захватчиксенчен хăтарнă ирĕклĕ çĕр çинче эпир каллех тĕл пулăпăр, çав кун çитесси инçе мар, эпир ăна шансах тăратпăр. Хĕрӳллĕ спасибо сире, юлташсем, пире панă парнешĕн. Çĕмĕрĕр ылханлă тăшмана, çĕмĕрĕр ăна пĕр хĕрхенмесĕр».

Геройла партизансемпе колхозниксен делегачĕсем халĕ Ленинграда пыраççĕ. Ленинград çыннисем çак хаклă хăнасене савăнăçлăн кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Комсомол активĕн пухăвĕ

Мартăн 23-мĕшĕнче Шупашкар хулинче комсомол активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта профсоюз, физкультура организацийĕсенчи çамрăксем те пулчĕç. Пуху профсоюз членĕсемпе комсомолецсен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулнă кросĕн итогĕсем тата çуркуннепе çуллахи вăхăтри массăллă спорт мероприятийĕсем çинчен ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн çарпа физкультура енĕпе ĕçлекен секретарĕн Р. Хасьянов юлташăн докладне итлерĕ.

Докладпа пренисем хыççăн кроса хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе организациленĕ оргкомитетăн председателĕ, ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ П. Михайлов юлташ комсомолăн хула комитетне куçса çӳрекен хĕрлĕ ялав пачĕ. Комсомолăн хула комитечĕн секретарĕ А. Охандерова юлташ, ВЛКСМ Обкомĕпе Чăваш АССР совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕн хĕрлĕ ялавне илнĕ май, çуллахи вăхăтри спорт мероприятийĕсене те активлăн хутшăнса, ялава яланах хăйсен аллинче тытса тăма пулса каларĕ.

Активăн пухăвĕнче пĕлтĕр спортăн те уйрăмах палăрнă 28 çын ВЛКСМ Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕн хисеплĕ грамотине илчĕç.

ВЛКСМ хула комитечĕ тата физкультурăпа спортăн хулари комитечĕ те кросра лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн 30 çынна хăйсен хисеплĕ грамотине пачĕç.

Пуху вĕçленнĕ хыççăн çамрăксем концерт итлерĕç.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Нимĕçсен блиндажĕнчен — нимĕçсен пехотине хирĕç

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, мартăн 23-мĕш. (ТАСС спецкорр.). [illegible] 3 ДЗОТ тата 15 блиндаж [illegible]

[illegible] Яков Лабута, 4 боеца ертсе кайса, тăшмана [illegible]

Блиндажа тытса илсе, Лабута тăшмана [illegible]

Часах ял патĕнчен килекен тăшманăн пехотине [illegible]

Карпала пирĕн пехотинецсем ытти блиндажсене те тытса илнĕ, ДЗОТсене [illegible]

А. ВИКТОРОВ.

Пирĕн чаçсем тăшманăн çирĕплетнĕ вырăнĕсене çĕмĕреççĕ

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, мартăн 23-мĕш. (ТАСС спецкорр.). Пирĕн пĕр чаçĕ [illegible]

Е. КОРЯВИЧЕВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Хĕвеланăç фрончĕ). Укерчĕк çинче: пирĕн танкистсем нимĕçсенчен тытса илнĕ танка çапăçăва хатĕрлеççĕ.
Л. ВЕЛИКЖАНИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Иван Грозный

Вырăссен авалхи хулин стенине пур енчен те тăшмансем çавăрса илнĕ. Красноармеецсен чаçĕсене Иван Грозный çул кăтартса, ертсе пынă. Вăл инçетелле шăтарас пек пăхса илнĕ те туйипе сулса янă, çирĕп йĕлтĕрĕ ăна, палмаркере, тăçта инçетех илсе кайнă. Вăл çул уçса пынă, вăл проводник пулнă. Хулана нимĕçсем туртса илсен, Иван Иванович Грозный, рабочи-коммунист, вăрмана партизана кайнă. Грозный отрячĕ çинчен часах пĕтĕм тавралла сарăлнă. Август уйăхĕнчех вăл хăйпе пĕрле вăрмана 14 çын ертсе кайнă. Халĕ ĕнтĕ, акă, вăл темиçе вуншар колхозника нимĕçсене хирĕç кĕрешĕве ертсе пырать.

Хула еннелле нимĕçсен боеприпассем тиенĕ автомашинисен колонни пынă. Шоферсем машинăсене васкамасăр, йăпăр-япăр пăхкаласа, хула еннелле илсе пынă. Çул хĕрринчи канавра, тарăн юр ăшĕнче вĕсен колоннине партизансем кĕтсе выртнă—Иван Грозный партизанĕсем. Маскировка халачĕсем тăхăннă партизансем шур юр çинче никама та палăрман. Акă ĕнтĕ тăшманăн чи малта пыракан автобусĕ курăнса кайрĕ. Иван Грозный юр çинчен тăрать те танка хирĕç пемелли гранатăна пĕтĕм вăйран сулса ярать. Çĕр çурăлса кайнă пек, вут çĕкленет, çав вут автобуса ярса илет. Машинăсем пĕрин хыççăн тепри сывлăшалла сирпĕнеççĕ. Унталла та кунталла снарядсем вăркăнаççĕ, патронсем çурăлаççĕ. Ытти машинăсем вара каялла çавăрăнаççĕ те мĕн вăй çитнĕ таран тараççĕ.

Иван Грозный ятне нимĕç оккупанчĕсем пит лайăх пĕлеççĕ. Унăн пуçĕшĕн нимĕçсем сахал мар укçа пама пулнă. Грозный çапла-ха вилмест, пурăнать. Вăл хăйĕн отрядне тăшманăн чи шалти тылне иле-иле кайнă, унăн кĕперĕсене арката-арката тăкнă, тăшманăн эшелонĕсене пĕтере-пĕтере тăкнă. Грозный хĕрлĕ боецсене тăшман çавăрса илме пытăнсан, вĕсене темиçе хутчен те тăшман ункинчен иле-иле тухнă, Грозный партизанĕсем пĕр боеца кăна мар, пĕр командира кăна мар вилĕмрен хăтарнă. Хăш чухне вăл фронт линийĕ урлă каçса красноармеецсен штабне çитнĕ, штабра ăна кирек хăçан та хаклă хăнана кĕтсе илнĕ пек ăшшăн кĕтсе илнĕ.

Унăн чи çывăх юлташĕ—отрядри чи лайăх разведчик Михаил Левитский пулнă—ватă старик, фанер тăвакан комбинатра ĕçленĕ рабочи. Левитский сăнĕ кăмăллă: кăкăр таран сухал, аллинче туратлă туя. Сисĕнмелле ан пултăр тесе, старик юри ухсахлакаланă. Нимĕçсем пĕри те ăна вăл партизан пулĕ тесе шутламан, вĕсем унтан пропуск та ыйтман. Левитский тылсем тăрăх çÿренĕ, хуласене кĕнĕ, унта вăл çынсене çакма тунă виселицăсене курнă, хăйне тăван çывăх çынсене мĕнле хĕненине курнă, çавтери тăрăшса пĕтĕм чунтан юратса тунă хаклă йышши япаласене çĕмĕрнине куççуль витĕр сăнанă. Çавсене курнипе ватă партизанăн чĕри ыратнă, пĕр хут кăна мар унăн ăшĕнче фашистсене çурса тăкас кăмăл вĕресе çĕкленнĕ, вăл хăй аллинчи туратлă патакĕпе пĕр хут кăна мар çав фашистсене пуçран çапасшăн пулнă. Анчах та старик хăйне хăй лăплантарнă: халлĕхе иртерех-ха ун пек тума. Левитский каялла отряда таврăннă, хаклă йышши сведенисем илсе килнĕ вăл, мĕн курни, мĕн илтни çинчен тĕплĕн каласа панă. Старик пасра çамрăксем тухăннă, вĕсем унăн сăмахне пĕрре те сая яман. Çамрăксен ăшĕнче те вăрçу юнĕ вĕренĕ. Вĕсем таврăнă та: фашист машинисем сывлăшалла сирпĕннĕ, кĕперĕсем çĕмĕрĕлнĕ, эшелонĕсем çунса-çунса кайнă. Фашистсем кăç пуçсассăн пит хăрана, вĕсем вăрмана, вăрманти пĕлесенчен шикленнĕ, çав пĕлесем хыçĕнче кашнинчех вĕсене Иван Грознийĕн нихăçан та тыткăнланман отрячĕн партизанĕсем ларнă пек туйăннă. Иван Грозный отрячĕ кĕрекен партизанла бригада, райком секретарĕ Глебов ертсе пыракан бригада, нимĕçсен салтакĕсене 196 çынна пĕтерсе тăкнă, нимĕçсенĕн 21 офицерне вĕлернĕ, боеприпассем тиенĕ 23 автомашинине, 2 поездне, тăшмансен пĕр самолетне пĕтерсе тăкнă, 2 кĕперне сирпĕнтерсе янă, чукун çулсемпе шоссе çулĕсене вата-вата тăкнă.

Тăшман шартах сикнĕ, пирĕн Хĕрлĕ Çар наступлени тума пуçланă. Иван Грозный хăйĕн чи çывăх помощникĕсене—Левитские, Андреева, Михайлова чĕнтернĕ те вĕсене красноармеецсен чаçĕсене ертсе пыма хушнă. Кашни сукмака, кашни тĕме партизансем витĕр пĕлсе тăраççĕ. Кÿлĕсемпе çырмасем тăрăх, çын алла тухайми кĕртсем урлă илсе пырса, вĕсем боецсене пĕр сас-чĕвĕ кăлармасăр, пĕр пăшал сасси сĕр хула хапхи патне илсе çитернĕ.

Ал. ИСБАХ.
(«Правда», мартăн 22-мĕш.)

Тăшманăн резервĕсене çĕмĕрсе пыраççĕ

КАНТАР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ. (Телефонпа, хамăр спецкортан). Пирĕн войскăсем талăнса пынине чарса лартма тăрăшса, нимĕçсем çапăçăва çĕнĕ резервсем кĕртеççĕ. Ĕнер фронтăн пĕр участокĕнче танксемпе авиаци пулăшнипе противник хаяр контратака туса пăхрĕ. Техникăна çапăçăва кĕртсе, тăшманăн оборонине çĕмĕрсе кĕнĕ пирĕн чаçсене сирсе пăрахма е хупăрласа илмех шутланă пулас вăл.

Фашистсем шутлани яланхи пекех тĕплĕ пулман. Пирĕн мухтавлă гвардеецсем, ирĕке кăларнă ялсенче çирĕпленсе ларса, тăшмана артиллерирен, минометсенчен, пулеметсенчен тата винтовкăсенчен аркатмаллах персе тăнипе кĕтсе илнĕ. Халăх пурăнакан пунктсем таврашĕсенче вут-çулăм пырса кĕмелле мар явăнса тăнă. Хăйсен юнĕсемпе чыхăнса ларса, нимĕçсем каялла чакнă.

Фронтăн çак участокĕпе юнашар тăшман çапăçăва 10 танк тата пехота батальонне кĕртнĕ. Ăна кунта та вăйлă вут-çулăмпа кĕтсе илнĕ. Виçĕ танка персе çĕмĕрсен, тăшманăн пехоти хăйĕн танкĕсем хыççăн каялла çавăрăннă.

Çапăçу хĕрсе пынă вăхăтра совет войскисем тăнă çĕре тăшманăн темиçе бомбардировщикĕ пырса çитнĕ. Пирĕн зенитчиксем пĕр-иккĕ пенипех пикировка тăвакан пĕр бомбардировщике ÿкернĕ. Вăл аякрах мар, вăрманта ÿксе саланса кайнă. Юлашки бомбардировщиксем, бомбăсене тĕлли-паллисĕр пăрахса тата пĕр сиен те кÿмесĕр, хăйсен территорийĕ çине вĕçсе тарнă.

Нимĕçсен оборонине нумаях пулмасть çĕмĕрнĕ районра нимĕçсен 514-мĕш дивизине кĕрекен 294-мĕш полкĕн чĕрĕ тăрса юлнă салтакĕсем вăрманта пытанса çÿреççĕ. Вĕсем фашистла войскăсен çĕнтерĕвĕсем çине шанмаççĕ ĕнтĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем, листовкăсем тупса, пирĕн енне каçаççĕ.

Пĕр ял çывăхĕнче 45 салтак тата вĕсем хушшинче 4 унтер-офицер икĕ кун вăрманта пытанса пурăннă. Пилĕк красноармееца курсан, вĕсем пăшалĕсене пăрахнă та тыткăна парăннă.

— Тыткăн пирĕншĕн вăрçăран хăтăлмалли чи лайăх май терĕмĕр эпир, — тет Эммануил Хайман ефрейтор. — Вăрçăн кашни кунĕ Хĕрлĕ Çара çитĕнÿ, Германи çарне сиен кÿрет. Пирĕн полка çапса аркатрĕç. Эпир икĕ кун вăрманта шăнса тата выçăхса çÿрерĕмĕр. Канашларăмăр та, çапăçма пире тĕлсĕр те усăсăр, терĕмĕр...

Çапла калаçаççĕ паян тыткăна паракан нимĕçсем.

(«Красная Звезда» хаçатран).

Нимĕçсен чаçĕсенче салтаксен комитечĕсене организациленĕ

Германипе Совет Союзĕ хушшинчи вăрçă фрончĕн пĕр участокĕнче, Хĕрлĕ Çар [illegible] пĕтĕмпех аптăраса çитнĕ участокра. Германи салтакĕсем хăйсен [illegible] офицерĕсене пăха нумаях пулмасть салтаксен комитечĕсем организациленĕ. Çав комитетсен организаторĕсене [illegible] çар сучĕ [illegible] пере-пере пăрахнă. (ТАСС).

„Вырăссен çарĕ тата вырăс халăхĕ калама çук лайăх кĕрешеççĕ"

Альфред Смит заявленийĕ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 23-мĕш. (ТАСС). Католиксен паллă деятелĕ, Нью-Йорк штачĕн губернаторĕ пулнăскер, 1928 çулти суйлавра Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен президенчĕ пулма кандидатра тăнăскер, Альфред Смит çакăн пек заявлени тунă: «Американецсем кирек кам та çакна лайăх ăнланса тăраççĕ: эпир Гитлера хирĕç кĕрешекен хамăр союзниксене мĕн пултарнă таран пулăшма тивĕçлĕ тата çав пулăшăва питех те васкавлăн памалла. Вырăссен çарĕ тата вырăс халăхĕ калама çук лайăх кĕрешеççĕ. Эпĕ, хам енчен мĕн тума пултарнине пĕтĕмĕшпех туса, Россиýна пулăшас шутпа «Российăна пулăшакан комитет» правленин членĕн постне йышăнтăм», — тенĕ.

Канада Совет Союзне пулăшать

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 24-мĕш. (ТАСС). Канадăри Торонто хулинче тухакан «Стар» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Канадăри Хĕрлĕ Хĕрес организацийĕн уполномоченнăйĕ Рутли çапла каласа панă: Совет Союзне медицина енĕпе пулăшу пама Канадăри халăх хушшинче 757 пин доллар ытла укçа-тенкĕ пухнă. Рутли пĕлтернĕ тăрăх, Канадăри Хĕрлĕ Хĕрес организацийĕ çав ĕç валли малтан 500 пин доллар пухма палăртнă пулнă.

Сикорский генералăн заявленийĕ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 23-мĕш. (ТАСС). Канадиен пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Польшăн премьер-министрĕ Сикорский генерал хăй Вашингтона туха каяс умĕн пичет представителĕсене çакăн пек заявлени тунă: халĕхи вăхăтра вăрçăн чи васкавлăн пурнăçа кĕртмелли задачи Совет Союзне хирĕç пулăшу парса, ăна хăвăртрах ăсатасси пулса тăрать,—тенĕ. Васкавлăн тумалли тепĕр ĕç—вăл иккĕмĕш фронт туса хурасси. Рузвельтпа Черчилль «çак вăрçă Германи территорийĕ çинче эпир çĕнтерÿ тунипе вĕçленмелле, çавăнпа та Европа чи кирлĕ çапăçу хирĕ пулса тăрать», тесе каланипе Сикорский генерал хăй килĕшни çинчен кăтартса панă.

«Россия,—тенĕ малалла Сикорский,—лайăх çапăçать, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн тăван çĕршывне хÿтĕлет, анчах та ăна пит нумай хĕçпăшал парасси çинчен тата иккĕмĕш фронт туса хурасси çинчен шантарса калани кирлĕ». Сикорский çапла кăтартса панă: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем вăрçă хуçтăшăнни пĕрлешнĕ çĕршывсене çĕнĕ вăйхăват парать, çав вăй-хăват оборонăран наступлени куçма, вăрçа малашне Германи территорийĕ çинче туса пырса, ăна çĕнтерÿпе вĕçлеме кирлĕ,—тенĕ.

Рузвельтпа тĕл пулса калаçнă чухне мĕнле ыйтусем сÿтсе-явасси çинчен Сикорский пĕлтермен. Вăл: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче вунă кун хушши пулатăп пулĕ, тенĕ. Çавăн хыççăн вăл Канадăн премьер-министрĕпе Маккензи Кингпа калаçма Оттава хулине тухса каять. Канадăра пурăнакан полякусем çине туслă кăмăлпа пăхнăшăн Сикорский Канадăна тав тунă тата вăл çапла каланă: Оттавăра Польша миссийне уçни Польшăпа Канада хушшинче тачăрах çыхăнусем пуласси не кăтартса паракан паллă пулса тăрать, тенĕ.

Турци журналисчĕ гитлерла „советнике" питлет

СТАМБУЛ, мартăн 23-мĕш. (ТАСС). Гитлерăн «Эводос эхо» хаçачĕ хăйĕн юлашки номерĕсенчен пĕринче статья пичетлесе кăларнă. Çав статьян авторĕ: «Германи майлă тăрасси Турци интересĕсемпе килĕшÿллĕ» тесе сĕмсĕррĕн çырать.

Турци журналисчĕ Ялчин «Ени сабах» хаçатра çав статьяна çивĕччĕн питлет. «Турцишĕн кам тус пулассипе тус пулас маррине татса парасси нимĕç журналисчĕсен ĕçĕ мар. Çак ĕç вăл турок сен хăйсен ĕçĕ кăна», — тесе çырать Ялчин. Автор малалла çапла асăрхаттарать: «Турок сем çак вăрçăра Европăна, çав шутрах Турцие те, Германия кăна хăратса тăнине кураççĕ. Çак шухăш тĕрĕс иккенне кашни турок çирĕплетсе парать».

Германин карательнăй экспедицийĕн Югославири ирсĕр ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 2[illegible]-мĕш. (ТАСС). «Таймс» хаçатăн дипломатиллĕ обозревателĕ çапла пĕлтерет: тĕрлĕ çĕртен илекен нумай хыпарсене тĕрĕсленĕ хыççăн, Югослави правительстви Германин 1941 çулти кĕркунне Югославире тунă карательнăй экспедицийĕн ĕçĕсем çинчен тĕплĕн çырса пĕлтернĕ. Белградран кăнтăралла, патриотсем захватчиксене хирĕç уйрăмăнах вăйлăн кĕрешнĕ вырăнсене, нимĕçсем 4 дивизи янă пулнă. Пĕр уйăх хушшинчех нимĕçсем Мачва районĕнче 15 пин халăха вĕлерсе тăкнă, ялсене çунтарса янă, пур пек выльăхсене хăйсем валли туртса илнĕ. Рудника районĕнче нимĕçсем Горни Милановац хулине пĕтĕмпех аркатса тăкнă, унта 450 çуртран пуре те 72 çурт çеç тăрса юлнă. Кралево хулинче 6000 çынна персе пăрахнă. Ытти хуласенче те çапла сахал мар çынсене пере-пере пăрахнă. Уйрăмăнах Ужица хулинче халăха нумай пĕтернĕ.

Октябрĕн 21-мĕшĕнче Крагуевац хулинче 7000 çынна ытла персе вĕлернĕ. Çав кунах тата нимĕçсем хулари вăтам шкулта 3 класра вĕренекен ачасене пĕр çĕре пухса пурне те персе пăрахнă. Çак ирсĕр ĕç нимĕçсен Крагуевацри войскисен командующийĕ Цигмерман пуçарнипе пулса иртнĕ.

Нимĕçсем çапла тискеррĕн хăтланаççĕ пулин те, халăхсем захватчиксене хирĕç тăма пăрахмаççĕ. Стефани агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Сербире тата Черногорире пĕр февраль уйăхĕнче кăна итальянецсене 224 салтакне вĕлерсе тăкнă тата 227 салтакне амантнă.

Париж районĕнче хĕрарăмсене массăллăн арестлеççĕ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 24-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, гитлеровецсем 300 хĕрарăма арестленĕ. Çав хĕрарăмсем хăйсен упăшкисене нимĕçсемшĕн ĕçлекен заводсене, Англи авиацийĕ бомбăсем пăрахас хăрушлăх умĕнче тăраканскерсене, ăсатнине хирĕç протестленĕ пулнă.

Хĕрарăмсем муниципалитет влаçĕсенчен çакна ыйтнă: нимĕçсемшĕн ĕçлемен предприятисемпе мастерскойсене организациленме ан чăрмантарăр, тенĕ. Çавăн пекех Булоньри, Бийанкурти тата Париж таврашĕнчи ытти вырăнсенчи нимĕçсем усă куракан предприятисем çине англичансем бомбăсем пăрахнине уççăнах ырланăшăн Париж районĕнче те нумай хĕрарăмсемпе арçынсене арестленĕ.

Риомри процесс

ЖЕНЕВА, мартăн 22-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Риомри судăн мартăн 20-мĕшĕнчи ларăвĕнче Сиар генерала допрос тунă. Сиар генерал малтан — дивизи командирĕ унтан корпус командирĕ пулнă. Агентство панă информаци тăрăх пăхсан, свидетель Франция вăрçăра поражени тÿснишĕн мĕнпур айăпа танксене хирĕç пемелли орудисемпе зенитнăй орудисем питех те çителĕксĕр пулни çине тата авиаци пулманни çине тÿнтерме хăтланнă. Вăл кăтартса панă тăрăх, май уйăхĕнчи операцисем пуçланнă тĕле унăн аллинче пĕтĕмпе те 6 самолет кăна пулнă пулать, июнĕн 15-мĕш тĕлне вара пĕр самолет та пулман иккен. Даладье свидетеле пулнă, танксене хирĕç пемелли 450 оруди складсенче выртнă, тесе пĕлтернĕ вăл. Даладье Вийемен генералăн заявленине илсе вуласа панă. Вийемен генерал перемири тунă тĕле Францин самолетсем вăрçă пуçланнă чухнехинчен чылай нумайрах пулнине çирĕплетсе панă. Даладье ыйтнипе танковăй батальонăн командирĕ пулнă Ражен свидетелĕн показанийĕсене вуласа панă. Ражен çапла кăтартса парать: Францин çарĕн питех те паха хĕçпăшал пулнă, танксене çителĕклĕ таран хĕçпăшаллантарнă пулнă тата вĕсен бронисем çирĕп пулнă.

Кун хыççăн допрос тунă свидетельсем — Франципе Германи хушшинче перемири тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссире Францин делегацине ертсе пынă Дуайан генерал, çавăн пекех тата Ланклю генерал панă показанисем Сиар генералăн показанийĕсемпе пĕр евĕрлех пулнă.

СТОКГОЛЬМ, мартăн 22-мĕш. (ТАСС). Гитлерла пичет Риомри суд пирки сĕнĕ хаярлăхпа тарăхса çырать. «Ангрифф» хаçат çав процесса «ухмаха ернисен çурчĕ» тесе ят панă. Гитлеровецсем çакăн пирки тарăхса кайнă: судăн Берлинри организаторсен шухăшĕпе Риомри процесăн вăрçă тухнишĕн Франция айăплине «кăтартса памалла» пулнă, анчах та процесс урăх çул-йĕрпе кайнă. «Риомри суд, — тарăхса çырать «Локаль анцейгер» хаçат,—вăрçă тухнишĕн айăплисене тупса парас вырăнне, Франция вăрçа çителĕксĕр хатĕрленни çинчен калакан ыйтăва сÿтсе-явать». Суд ĕçне малалла та çаплах туса пырсан, Виши правительствине кайран питех те хытă лекесси пирки хăратса çырать хаçат.

Эстони халăхĕн представителĕсен митингĕ

Мартăн 2[illegible]-мĕшĕнче Мускавра Эстони халăхĕн представителĕсен митингĕ пулса иртнĕ. Митинг ирĕклĕхе юратакан эстонецсем [illegible] фашистла оккупантсене [illegible] курайманнине палăртакан демонстраци пулса тăнă. Совет Эстонийĕн рабочийĕсемпе хресченĕсем тата интеллигенци хăйсен чи паттăр çыннисем урлă пĕтĕм тĕнче умĕнче, пур çынна та илтĕнмелле халăхсем тăшмана хирĕç мĕн çĕнтеричченех çапăçма хатĕр тăни çинчен [illegible] каларĕç. Совет Союзĕ чи халăхсене пĕрле юнашар тăрса вĕсем паттăрăн хăйсен ирĕклĕхĕшĕн, хăйсен [illegible] çапăçаççĕ те. Эстони халăхĕ [illegible] фашистла захватчиксен тыткăнĕнче калама çук пысăк асап курать. Анчах та çапла пулсан та, вăл хăйĕн кураймалла тăшманне пуçхăрман та парăнман тата парăнас та çук!

Çавăн çинчен хĕрÿллĕн каланă та ĕнтĕ митингра Эстони ССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ—Иоганес Варес писатель те, эстонецсен паллă литераторĕ—Оскар Урба та, Эстонири Коммунистсен Партийĕн Центральнăй Комитет секретарĕ Каротамм та, Хĕрлĕ Çарăн эстонецсенчен тăракан национальнăй чаçĕн командирĕ капитан Кукк та тата ыттисем те çавăн çинчех каланă.

Митингра пулнисем калама çук хаваслланса Сталин юлташ патне салам яма йышăннă тата Эстони халăхне чĕнсе çыру çырнă.

Эстони халăхĕн представителĕсен митингне радио тăрăх панă. (ТАСС).

—o—

Совет Союзĕ тăрăх

▲ «Башзолото» тресчĕ пĕрремĕш квартал планне срокчченех тултарнă. Учалински рудник ылттăн тупмалли виç уйăхлăх задание 66 процент ирттерсе тултарнă. Çавăн пекех тата «Майкаинзолото» тресчĕ те (Казахстанра) пĕрремĕш квартал программине срокчченех тултарнă.

▲ Вутăпа çÿрекен газогенераторнăй автомобиле Хапчерангински олово комбиначĕн технически руководителĕ Падалко юлташ çĕннипе вырăнти çĕрт[illegible] пĕ çÿремелле тунă. Çапла тунипе топливо 3 хут сахалтарах пĕтет.

▲ Мускав хулинчи Ростокинскри райпромтрестăн алă-пушмак фабрикинче галантерея изделийĕсем туса кăларма çĕнĕ цех организациленĕ. Çав цех тир-сăран выранне каякан япаласенчен портфельсем, портмонесем, [illegible], хĕрарăмсен сумкисем тата ытти изделисем те туса кăларма тытăнать. (ТАСС).

—o—

Ют çĕршывсенче

● Гитлеровецсем Норвеги офицерĕсемпе ытти çыннисене, 148 çынна, вĕсем патриотсем пулнăшăн, Хĕвелтухăç Германири концентрациллĕ лагерьне янă.

● Германин çар строительствинче ĕçлекен датчансене 100 çынна текех ĕçе тухма килĕшмен пирки нимĕçсен Тронхейм çывăхĕнчи концентрациллĕ лагерьне янă.

● Германи влаçĕсем Брюссель хулинче приказ кăларнă. Çав приказ тăрăх, каботаж тăвакансене малашне персе пăрахмалла мар, çакса вĕлермелле.

● Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче çара хăйсен ирĕкĕпе 36 çултан пуçласа 45 çула çитиччен хисене те илмелле.

● Канада çарĕ вăрçă пуçланнăранпа 10 хут ÿснĕ. Канада промышленноçĕ 200 пин çар автомашини туса кăларнă. Кăçал суту-илÿ карапĕсем нумай тăваççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, çав карапсен тоннажĕ 500 пин тоннăна çитет.

Отвăтлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ

ИНЖЕНЕРЫ И ТЕХНИКИ, КОНСТРУКТОРЫ ПО ХОЛОДНОЙ ОБРАБОТКЕ МЕТАЛЛА, ЭКОНОМИСТЫ-ПЛАНОВИКИ, НОРМИРОВЩИКИ, СТЕКЛОГРАФИСТ, ИНЖЕНЕР-ЭЛЕКТРИК-МОНТАЖНИК, БУХГАЛТЕРА, СЧЕТНЫЕ, СНАБЖЕНЧЕСКИЕ И СКЛАДСКИЕ РАБОТНИКИ;

РАБОЧИЕ СЛЕДУЮЩИХ СПЕЦИАЛЬНОСТЕЙ:

токаря, слесаря, жестянщики, модельщики, прессовщики, штамповщицы, зачистчицы, намотчицы, каменщики, печник, кочегары, фрезеровщики, сверловщики, литейщики, сварщики, гальваники, слаботочники, радист, плотники, шорники, дворники, истопники, строгальщики, шлифовщики-заточники, шоферы 1 и 2 класса, электро-слесарь по авто, наборщик типографии, электромонтеры, ящичники-упаковщики, столяры, возчики, уборщицы, подсобные рабочие;

ПОЖАРНЫЕ РАБОТНИКИ;

ВАХТЕРЫ-ОХРАННИКИ (мужчины и женщины). Зарплата до 300 руб.

Грузчикам и возчикам предоставляются общежития.

ПРИНИМАЮТСЯ ПЕРЕКВАЛИФИКАНТЫ (взрослые ученики от 16 лет).

За время обучения от 1 до 3-х месяцев получают от 150 руб.

За справками обращаться от 8 до 14 часов по адресу: ул. Ленинградская, 38, отдел кадров.
6—2

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 8—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ял-хуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 427 Гос. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 262. Ф. 6. 58 64 п: л: